28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
13
ЭРНЕКУН
133(6884) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

65. «Волгарь» колхоз (председателĕ М. Н. Оливанов юлташ, ферма заведующийĕ Н. Ф. Федотов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майраклă шултăра выльăх енĕпе 123 процент, сыснасем енĕпе 127 процент, сурăхсем енĕпе 160 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 126 процент тултарнă. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн ашкакай парса татнă.

Чăваш АССР 25 çул тултарнă юбилей ячĕпе килнĕ саламсем

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумне
Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне
ВКП(б) Чăваш Обкомне

Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕ тата ВКП(б) Мускав хула комитечĕ столицăри ĕçсыннисен ячĕпе Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцие Чăваш АССР-не туни 25 çул тултарнă кун хĕрӳллĕ салам яраççĕ.

Советлă Чăваш Республики 25 çул тултарнине Совет Союзĕ гитлерла Германие çĕнтернĕ пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ кунсенче уявлаççĕ. Курайми тăшмана аркатса тăкас ĕçе Чăваш АССР-ĕнчи ĕçсыннисем пысăк парне кӳчĕç.

Советлă Чăваш Республикин халăх хуçалăхĕпе культури 25 çул хушшинче ăнăçлăн аталанса чечекленни вăл—Октябрьти социализмлă аслă революцин хăватлă та çĕнтерӳллĕ вăйхăвачĕн результачĕ, Ленин—Сталин партийĕн организациллĕ ĕçĕн результачĕ пулса тăрать.

Российăри Федерациллĕ Советлă Социализмлă Республикăсен составĕнче Чăваш АССР-ĕ яланах вырăс халăхĕн юратакан тата савакан тăванĕ пулнă. Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле Мускав ĕçсыннийĕсем Советлă Чăваш çĕршывĕнчи ĕçсыннисем хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчи задачăсене, большевиксен партийĕпе Совет правительстви кăларса тăратнăскерсене, татса парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн питĕ хавасланаççĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕ тата ВКП(б) Мускав хула Комитечĕ Чăваш АССР-ĕнчи ĕçсыннисене пирĕн социализмлă Тăван çĕршыван çар тĕлĕшĕнчи тата экономикăри вăйхăватне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунаççĕ.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Советлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç тата учитель, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕ. **ВКП(б) Мускав хула Комитечĕ.**

Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совет Президиумне
Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне
ВКП(б) Чăваш Обкомне

Ĕçсынни депутачĕсен Горький Область Совечĕ тата Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Область Комитечĕ облаçри рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин ячĕпе Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнă кун ăна хĕрӳллĕ салам яраççĕ.

Çак паллă куна чăваш халăхĕ пирĕн Тăван çĕршыв Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пынипе тунă паллă çĕнтерӳ тапхăрĕнче уявлать.

Советлă Чăваш республики аталанса пынă çул—Октябрьти социализмлă революцин хăватлă та çĕнтерӳллĕ вăйхăватне, большевиксен аслă партийĕн тата унăн çулпуçĕсен Ленинпа Сталинăн организаторла рольне, ленинла-сталинла гениллĕ наци политикин тĕрĕслĕхне лайăх кăтартса парать.

Советлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе кĕске вăхăтрах хайсен экономика тата культура тĕлĕшĕнчи кая юлнăлăхне пĕтерсе, республикăри халăх хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Чăваш халăхĕ Чăваш республикинчи большевиксен партии организацийĕ ертсе пынипе, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле, фронтра—хăйĕн ывăл-хĕрĕсен юнĕпе, тылра—вăя хĕрхенмесĕр ĕçленипе пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, чыслăхне тата пикама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Горький Область Совечĕ тата Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Область Комитечĕ сире социализм строительстви ĕçĕнче малалла çитĕнӳсем тума ырă сунаççĕ, Чăваш республикинчи ĕçсыннисем мирлĕ аталану тапхăрĕнче те промышленноçра тунă хăйсен çитĕнĕвĕсене малалла йышлăлантарса пырассине, ялхуçалăхне тата культурăна çитĕнтерес тĕлĕшпе пысăк ăнăçусем тăвассине çирĕп шанса тăраççĕ.

Сывă пултăр Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики!

Сывă пултăр çĕнĕрен çуралнă чăваш халăхĕ!

Ĕçсынни депутачĕсен Горький Область Совет Исполкомĕн Председателĕ В. ПЕДЬЕВ.

ВКП(б) Область Комитечĕн Секретарĕ М. РОДИОНОВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Лаврентий Павлович Берияна çар званийĕ—Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парасси çинчен

Лаврентий Павлович Берияна çар званийĕ—Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июлĕн 9-мĕшĕ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔН ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

Всеволод Николаевич Меркулова çар званийĕ—арми генералĕ ятне парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Всеволод Николаевич Меркулова СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕ—Арми генералĕ ятне парас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июлĕн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Известия" хаçатăн редакторне Л. Ф. Ильичева Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пичет ĕçĕнче ăнăçлă ĕçленĕшĕн «Известия» хаçатăн редакторне Леонид Федорович Ильичева Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июлĕн 11-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культурăпа искусство работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 131-мĕшпе 132-мĕш номерĕсенче).

«ХИСЕП ПАЛЛИ» ОРДЕНПА

27. Василий Иванович **Караушева** — ВКП(б) Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

28. Сергей Васильевич **Карташова** — республикăри «Красная Чувашия» хаçат редакторне.

29. Иван Георгиевич **Кизилова** — ĕçсынни депутачĕсен Канаш хулинчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

30. Мария Ивановна **Кольцовăна** — Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

31. Алексей Константинович **Константинова**—Красноармейски МТС директорне.

32. Петр Николаевич **Майкова** — Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председательне.

33. Кирилл Дмитриевич **Медянина** — ĕçсынни депутачĕсен Шăхасан районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

34. Семен Трофимович **Митряшова** — Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх Халăх Комиссарне.

35. Леонид Хрисанфович **Михайлова** — ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

36. Файвель Лейбович **Мойсика** — ВКП(б) Шупашкар хула комитет секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместительне.

37. Игнатий Осипович **Молодова** — Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артистне.

38. Александр Сергеевич **Молоствова**—ВКП(б) Тăвай райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

39. Григорий Владимирович **Мордковича**—Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕн директорне.

40. Иван Никитич **Никитина** — Наркомзагăн Шăхасан районĕнчи Уполномоченнайне.

41. Семен Петрович **Никитина**—ВКП(б) Чкаловски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

42. Иван Васильевич **Новикова** — ВКП(б) Кувакино райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

43. Василий Степанович **Обухова**—РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ врачне, Чăваш АССР-ĕнчи сывату стационарĕн заведующине.

44. Екатерина Михайловна **Ортиковăна** —Çĕмĕрлери торф предприятийĕн работницине.

45. Рафаил Афанасьевич **Осанова** — Чăваш АССР Наркомземĕн пахчаçимĕç управленийĕн начальникне.

46. Петр Николаевич **Осипова** — Шупашкар поликлиникин директорне.

47. Илья Петрович **Петрова** — Тăвай МТС-ĕн трактор бригадин бригадирне.

48. Александр Иванович **Пинулева** — Чăваш АССР Наркомземĕн производство управленийĕн главнăй инженерне.

49. Михаил Иванович **Репкина** — ВКП(б) Чăваш Обком Секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместительне.

50. Леонид Никонович **Родионова** — Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕнчи чăваш труппин художество руководительне.

51. Аркадий Петрович **Рябова**—ВКП(б) Пăрачкав райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

52. Александр Федорович **Самсонова** — ВКП(б) Элĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

53. Иван Алексеевич **Скворцова** — ĕçсынни депутачĕсен Чурачăк районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

54. Николай Федорович **Смыкова**—ĕçсынни депутачĕсен Пăрачкав районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

55. Сергей Афанасьевич **Соколова** — ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

56. Дмитрий Федорович **Талдыкина**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн организаципе инструкторсен пайĕн заведующине.

57. Михаил Федорович **Терентьева** — Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместительне.

58. Петр Григорьевич **Тойдерякова** — Вăрнар МТС-ĕн трактор бригадин бригадирне.

59. Евгений Алексеевич **Токмакова** — Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕнчи вырăс труппин художество руководительне.

60. Петр Васильевич **Тощева**—Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госплан председательне.

61. Анастасия Фадеевна **Фадеевăна** — Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн методпентрĕнчи ача-пăча секторĕн научнăй руководительне.

62. Николай Иванович **Хромова** — ĕçсынни депутачĕсен Етĕрне районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

63. Александра Михайловна **Шалфеевăна**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн шкулсен пайĕн заведующине.

64. Иван Александрович **Шорникова**—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместительне.

65. Исаак Соломонович **Шустина** — Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» завод директорне.

66. Аркадий Александрович **Эсхеле**—Чăваш АССР-ĕнчи поэта.

67. Василий Яковлевич **Яковлева** — республикăри «Чăваш Коммуни» хаçат редакторне.

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Николай Спиридонович **Айзмана** — Чăвашсен Академиллĕ театрĕн режиссерне.

2. Михаил Петрович **Аленцева** — Чăвашсен Академиллĕ театрĕн актерне.

3. Пантелеймон Андреевич **Андреева**—Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз председательне.

4. Лидия Максимовна **Анисимовăна** — Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи ткачихăна.

5. Федор Тимофеевич **Афендеркина** — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн трактористне.

6. Хуспетдин Сейфутдинович **Булатова** — Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз председательне.

7. Андрей Васильевич **Васильева** — Шăхасан районĕнчи «Красное Сормово»... райçĕрĕç пайĕн старши ветеринари врачне.

8. Федор Васильевич **Васильева** — Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç вăйĕсене учета илес тата ĕçе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен бюро заведующине.

9. Максим Васильевич **Верхунова** — Вăрмар МТС-ĕн старши механикне.

10. Николай Виссарионович **Виссарионова**—Чурачăк районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председательне.

11. Андрей Филиппович **Волкова** — Калинино МТС директорне.

12. Петр Алексеевич **Воробьева** — Пăрачкав районĕнчи «Борьба за социализм» колхоз председательне.

13. Иван Гаврилович **Гаврилова** — Çĕрпӳ МТС-ĕн трактористне.

14. Тимофей Герасимович **Герасимова** —ĕçсынни депутачĕсен Чкаловски районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председательне.

15. Федор Семенович **Герасимова** — Первомайски районри «Ударник» колхоз председательне.

16. Анна Дмитриевна **Глушаченкăна**—Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председательне.

17. Денис Григорьевич **Григорьева** — Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

18. Татьяна Григорьевна **Григорьевăна**—Вăрмар çĕрĕçпайĕн старши зоотехникне.

19. Фекла Никитична **Данилевăна** — Октябрьски районри Кутемер ял Совет председательне.

20. Александра Федоровна **Демьяновăна**—Тăвай районĕнчи «Искра» колхозри сурăх фермин заведующине.

21. Емельян Дмитриевич **Дмитриева**—Красноармейски районри «Новое хозяйство» колхоз председательне.

22. Николай Иванович **Долбилова** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн вырăнти топливо тата вăрман промышленность пайĕн заведующин заместительне.

23. Павел Евлампиевич **Евлампиева** — Шăхасан районĕнчи «Трактор» колхоз председательне.

24. Петр Егорович **Егорова** — Шупашкар районĕнчи «Память Ленина» колхоз председательне.

25. Валентин Григорьевич **Елагина** — Сĕнтĕр районĕнчи «Революция 1905 года» колхоз председательне.

26. Васьян Алексеевич **Ефремова** — Комсомольски МТС-ĕн трактор бригадин бригадирне.

27. Николай Васильевич **Закаджеева**—Йĕпреç леспромхозĕнчи шпал завочĕн механикне.

28. Александр Павлович **Заплаткина**—Чкаловски районри «Гвардеец» колхозăн пахчаçимĕç бригадин бригадирне.

29. Анастасия Захаровна **Захаровăна**—Канаш МТС-ĕн 5-мĕш трактор бригадин бригадирне.

30. Петр Терентьевич **Золотова** — Чăвашсен Государство Издательствин директорне.

31. Аким Иванович **Иванова**—ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

32. Степан Иванович **Иванова**—Сĕнтĕр районĕнчи «Кожевник» артель председательне.

33. Федор Иванович **Иванова** — Вăрмар районĕнчи «Свобода» колхоз председательне.

34. Вера Васильевна **Ивлевăна** — Вăрмар районĕнчи «Заря» колхоз председательне.

35. Александр Ильич **Ильина** — Чурачăк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне.

36. Ананий Карпович **Карпова** — Элĕк районĕнчи сывлăх пайĕн заведующине.

37. Дмитрий Александрович **Киселева** — Атăл леш енчи торф предприятийĕн чугун çул юппин старши мастерне.

38. Евдокия Сергеевна **Комиссаровăна** —Елчĕкри район больницин главнăй врачне.

39. Александр Кондратьевич **Кондратьева**—Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» колхозăн колхозницине.

40. Иван Гаврилович **Коновалова** — Комсомольски районри Шупит ячĕпе тăракан колхоз председательне.

41. Александр Константинович **Константинова** — Чкаловски МТС-ĕнчи çамрăк хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирне.

42. Гаврил Иванович **Концова**—Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхоз председательне.

43. Степан Григорьевич **Коровина** — Куславкка районĕнчи «Спартак» колхозăн старши конюхне.

44. Захар Кириллович **Кочнева** — Шупашкарти «Пекарь» артелĕн çăкăр пĕçерекенне.

45. Серафим Александрович **Кузнецова** — ВКП(б) Куславкка райкомĕн иккĕмĕш секретарьне, малтан ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн помощникĕ пулса ĕçленĕскере.

46. Григорий Тимофеевич **Кузьмина** — Çĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхоз председательне.

47. Николай Сергеевич **Куликова**—Шăмăршă районĕнчи «Правда» колхозăн конюхне.

48. Герман Степанович **Лебедева** — композитора.

49. Перасковья Петровна **Ложкинăна**—Канаш районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри ĕне сăвакана.

50. Прокопий Миронович **Лукина** — Вăрнар МТС-ĕнчи старши агронома.

51. Степан Васильевич **Макарова** — ВКП(б) Елчĕк райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.

52. Афанасий Трифонович **Максимова**—Ишлей районĕнчи «Пархикассы» колхоз председательне.

53. Матрена Васильевна **Максимовăна** — Шăмăршă районĕнчи «Первое мая» колхозри колхозницăна.

54. Евстафий Тимофеевич **Мартынова** — Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

55. Тихон Егорович **Матвеева** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующин заместительне.

56. Георгий Семенович **Миронова** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн партипе комсомол кадрĕсен секторĕн заведующине.

57. Владимир Михайлович **Михайлова**—Советски районри «Электросвет» колхоз председательне.

58. Мария Михайловна **Михайловăна**—Йĕпреç МТС-ĕн трактористкине.

59. Григорий Изосимович **Мишакова**—Вăрнар МТС-ĕнчи 2-мĕш номерлĕ трактор бригадин бригадирне.

60. Илья Тихонович **Мокеева** — Октябрьски районри «Труд» артель председательне.

61. Тихон Васильевич **Налимова** — Муркаш районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председательне.

62. Полина Ивановна **Николаевăна** — Етĕрне районĕнчи Чаканар ял Совет председательне.

63. Клавдия Ильинична **Одинцовăна**—Сĕнтĕр районĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхозри сысна пăхакана.

64. Зоя Петровна **Осановăна**—Канаш районĕнчи «Красная Звезда» колхозри сысна пăхакана.

65. Константин Иванович **Патершина**—Турхан лесничествин объездчикне.

66. Николай Ефремович **Петрова** — Вăрнар районĕнчи «Самолет» колхоз председательне.

67. Василий Ерофеевич **Пыркина** — Чкаловски МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирне.

68. Елена Ефимовна **Селеховăна** — Кувакино районĕнчи «12 лет Октября» колхозри сад ăстине.

69. Раиса Гордеевна **Семеновăна** — ВЛКСМ Советски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

70. Андрей Тимофеевич **Скворцова** — Куславкка МТС-ĕнчи бригадир-комбайнера.

71. Михаил Григорьевич **Смирнова**—Вăрнар районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

72. Александр Агапович **Спекева** — Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» колхоз бригадирне.

73. Моисей Спиридонович **Спиридонова** — Чăваш АССР-ĕнчи совет художникĕсен союзĕн председательне.

74. Анна Евдокимовна **Сорокинăна** — Пăрачкав районĕнчи «Красная степь» колхоз председательне.

75. Александр Петрович **Стремина** — Шупашкар пристанĕнчи баржа шкиперне.

76. Георгий Николаевич **Стрункова** — Елчĕк МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирне.

77. Александр Трофимович **Тезенева**—Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» колхоз председательне.

78. Мария Матвеевна **Тихоновăна** — Чăвашсен Академиллĕ Театрĕн актрисине.

79. Георгий Тимофеевич **Тимофеева** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕн заместительне.

80. Натфулла Гайнуллович **Фейзуллина** — Чкаловски районри «Кзыл-Тан» колхоз председательне.

81. Сергей Филиппович **Филиппова** — Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

82. Сергей Христофорович **Христофорова**—Шăхасан районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз председательне.

83. Анна Петровна **Черновăна** — Калинино районĕнчи «Броневик» колхозри колхозницăна.

84. Вера Павловна **Шароновăна** — ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн организаципе инструкторсен пайĕн заведующине.

85. Антонина Зиновьевна **Шульпенковăна** — Чăвашсен Трахом Институчĕн директорне.

86. Иван Викторович **Яхварова** — Элĕк МТС-ĕн директорне.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНАШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Петр Александрович **Александрова**—Чурачăк районĕнчи «Первое мая» колхоз председательне.

2. Андрей Алексеевич **Алексеева** — Йĕпреç районĕнчи Черноречински фельдшер пунктĕнчи фельдшера.

3. Александра Антоновна **Антоновăна**—Канашри пир-авăр фабрикинчи ткачихăна.

4. Анастасия Антоновна **Архиповăна**—Куславкка районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри сысна пăхакана.

5. Алексей Ахтямович **Ахтямова** — Тăвай районĕнчи «Новый путь» колхоз председательне.

6. Ольга Матвеевна **Бабаевăна** — Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхоз бригадирне.

7. Илья Васильевич **Банифатьева** — Елчĕк районĕнчи «Искра Ильича» колхоз председательне.

8. Роман Афанасьевич **Баранова** — Чкаловски районри «Гвардеец» колхоз председательне.

9. Михаил Дмитриевич **Белова** — Пăрачкав МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирне.

10. Татьяна Никитична **Ванюшинăна** —Сĕнтĕр районĕнчи «Новая Юнга» колхоз председательне.

11. Александра Ивановна **Васильевăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председательне.

12. Павел Васильевич **Васильева** — Шупашкар районĕнчи Сывлăх пайĕн заведующине.

13. Асьма Халитовна **Вахтитовăна** — Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхозри ферма заведующине.

14. Татьяна Сергеевна **Воробьевăна**—Канаш районĕнчи Сиккасси участокĕнчи больница заведующине.

15. Филипп Гаврилович **Гаврилова** — Первомайски районри «Большевик» колхоз председательне.

16. Иван Александрович **Горшкова** — Елчĕкри крахмал завочĕн директорне.

17. Клара Петровна **Григорьевăна** — Çĕрпӳ районĕнчи эпидемиолога.

18. Устинья Григорьевна **Гурьевăна**—Шупашкарти чăлха фабрикинчи работницăна.

19. Тамара Владимировна **Дербеневăна**—Шупашкар хулинчи телефон станцийĕнчи телефонисткăна.

20. Агния Дмитриевна **Дмитриевăна**—Элĕк районĕнчи Ехремкасси ял Совет председательне.

21. Иван Дмитриевич **Дмитриева** — Советски районри «Коминтерн» колхоз председательне.

22. Николай Дмитриевич **Дмитриева**—Куславкка промкомбинатĕнчи урапа-çуна юсакан мастерской мастерне.

23. Ираклий Николаевич **Долганова**—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн инженерне.

24. Иван Семенович **Долгова**—Шăхасан МТС-ĕнчи тракториста.

25. Лидия Сергеевна **Дружининăна** — Атăл леш енчи торф предприятийĕнчи торф касакана.

26. Никита Андреевич **Дыдычкина** — Пăрачкав районĕнчи «Новый путь» колхоз председательне.

27. Александр Александрович **Зайцева** —ĕçсынни депутачĕсен Калинино районĕнчи Совечĕн исполкомĕн председателĕн заместительне.

28. Мария Николаевна **Зайцевăна** — Кувакино районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз конюхне.

29. Вадим Алексеевич **Калашникова**—Атăл леш енчи электростанцин слесарьне.

30. Егор Федорович **Карпеева**—Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри лаша фермин заведующине.

31. Александр Филиппович **Кахевские** —Тăвай районĕнчи хаçат редакторне.

32. Алексей Кириллович **Кириллова**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Социализм» артельри çăмата йăвалакана.

33. Сергей Васильевич **Клибышева** — «Центрозаготзерно» Чăваш республикинчи кантурĕн управляющин заместительне.

34. Виктор Дмитриевич **Кожевникова** —Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи трактористa.

35. Василий Дмитриевич **Коновалова**—Шăмăршă райçĕрĕç пайĕнче хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен зоотехника.

36. Григорий Корнилович **Корнилова**—Чурачăк районĕнчи «Правда» колхоз председательне.

37. Василий Кузьмич **Кузьмина**—Вăрнар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председательне.

(Юлашки пулать).

ЧАПЛĂ ХĂНА

Çатма пек яка Етĕрне çулĕпе кайсан-кайсан, машина сулахая пăрăнчĕ те пĕчĕк ял çулĕне анаталла ана пуçларĕ. Куç умне йăмраллă ял тухса ларчĕ. Ку яла пĕлмен çын сахал пулĕ Чăваш республикинче. Авал ăна Оринкино тетчĕç, халĕ ял ятне асăнмасçĕ, пурте «Красное Сормово» теççĕ. Мĕншĕн тесен «Красное Сормово» колхоз 30-мĕш çултанпах республикăра паллă вырăн йышăнса пырать. Машина ял патне çывхара пуçласан, уйхапхи яр уçăлса кайрĕ те, ялтан шурă кĕпеллĕ ачасем чупса тухрĕç. Машина çинче ылтăн укаллă картуса курсан, вĕсем аллисемпе сулкама пуçларĕç.

Машина яла кĕрсе клуб патне çитсе чарăнчĕ: ешĕл çерем çинче шурă кĕпеллĕ, сенкер, кăвак хĕрлĕ чĕрçиттиллĕ хĕрсем, ачаллă арăмсем, шурă сухаллă старыксем. Пĕтĕм ял чаплă хăнана кĕтсе илме урама тухнă. Машина ăшĕнчен нимĕççен Дрезден хулине чи малтан кĕрсе кайнă дивизин командирĕ Трофимов генерал-майор тухать. Вăл колхозниксемпе колхозницăсене алă парса тухрĕ, пурте йывăç айĕнчи уй чечекĕсемпе илемлетнĕ вăрăм сĕтел хушшине ларчĕç.

Савра питлĕ старик сăра тултарчĕ те, генерала тыттарчĕ.

— Малтанхи куркана пирĕн тусăн, пирĕн учительшĕн, пире нимĕç захватчикĕсенчен çăлнă асăран та аслă çыншăн, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ аслă Сталиншăн ĕçетĕп!—терĕ Захар Трофимович.

Халăх алă çупса ячĕ.

Генерал çумĕнче пĕр енче колхозница Ксения Григорьева, тепĕр енче колхоз председателĕ Майков юлташ ларать. Иккĕшĕ те вĕсем орден илнĕ çынсем.

— Епле эсĕ, чăваш ачи, çакнашкал пысăк çын пултăн?—ыйтрĕ генералран хирĕç ларакан старик.

— Ленинпа Сталин пире, ĕмĕр-ĕмĕр чуралăхра пурăннă чăвашсене, Аслă Совет державин çемьине хутшăнтарса, телейлĕ халăх турĕç!—ответлерĕ генерал.

— Авалтанпах чăвашсен ырă пиччĕшĕн, аслă вырăс халăхĕшĕн, чăвашсен чи кăмăллă тусĕшĕн! — терĕ Захар Трофимович иккĕмĕш куркине çĕклесе. Унтан пурте клуба кайрĕç.

Клубра колхоз банкечĕ пуçланчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем генералпа сăмахланă хушăра артист Кудряшов чăваш юррине юрласа ячĕ. Халăх шăпланчĕ. Колхозниксем чăваш юрăçине итлеççĕ.

Кудряшов юрласа пĕтерсенех хуткупăс тытнă колхозниксем виççĕн тухрĕç те, ташă кĕвви каласа ячĕç. Залра ташă пуçланчĕ. Ташлама генерал тухрĕ. Ваттисем алă çупса ячĕç.

— Юмахри пурнăç çитрĕ... Чăваш хĕрĕпе генерал ташлать. Авал эпир генерал куçĕ умне те курăнма хăраттăмăр, — терĕ пĕри, авал салтакра пулнă старик.—Кун хыççăн ĕнтĕ вилсен те çылăх мар...

— Вилме юрамасть, пурăнас пулать, асатте, пурăнас пулать!—ответлерĕ генерал, колхоз хĕрĕсемпе ташласа тара ўкнĕскер.

Вилме шухăшланă старик йăл кулса ячĕ те, аллисемпе пилĕкне тытса, ташша яра пачĕ.

Тĕттĕм пуличченех ĕçкĕ турĕç колхозниксем. Ансăртран пуçланса кайнă ĕçкĕ чăн-чăн халăх уявĕ пулса тăчĕ.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.

Ача амăшĕ-героиньăсем

Çак кунсенче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ хăйĕн Указĕ тăрăх пирĕн республикăри икĕ ача амăшне—Улатăр районĕнчи Наталия Григорьевна Шишуева юлташа тата Кувакино районĕнчи Анна Николаевна Ванюхина юлташа «Ача амăшĕ—героиня» ятне панă.

Наталия Григорьевна 44 çулта, вăл Тăван çĕршыва 9 хĕр тата 3 ывăл пăхса çитĕнтерсе пачĕ. Чи аслă хĕрĕ Дария тата 22 çулхи Настя Чуварлейре счетоводра ĕçлеççĕ. 21 çулхи Николай Хĕрлĕ Çарта пурăнать. Виççĕмĕш хĕрĕ Маруся Улатăр хулинче машинистка пулма вĕренет. Клавдия, Виктор, Борис, Зинаида шкулта вĕренеççĕ. Валентина, Нина, Анна тата Мила пĕчĕккĕ-ха, вĕсем шкула çўреймеççĕ.

Наталия Григорьевна Шишуева колхозра ĕçлет.

Анна Николаевна Ванюхина юлташ 6 хĕр тата 4 ывăл ўстерет. Унăн аслă ывăлĕсем Иванпа Михаил Хĕрлĕ Çарта пурăнаççĕ. Ыттисем вĕренеççĕ, пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленеççĕ.

«Ача амăшĕ—героиньăн» хисеплĕ ятне илнĕ май, Шишуевăпа Ванюхина юлташсене савăнăçлă кунçул тата çирĕп сывлăх сунатпăр.

Данин Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ Т. Дессинг хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинина пани

Июлĕн 10-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Данин Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне Т. Дессинг господина йышăннă. Т. Дессинг господин М. И. Калинина хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделĕн 5-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса тăракан М. С. Ветров.

Верительнăй грамотăсене йышăнсан, Михаил Иванович Калинин Т. Дессинг господинпа калаçнă.

КИНОТЕАТРСЕНЧЕ „ÇĔНТЕРЎ ПАРАЧĔ" ЯТЛĂ ФИЛЬМ КĂТАРТМА ТЫТĂННĂ

Мускав хулинчи кинотеатрсенче «Çĕнтерў парачĕ» ятлă çĕнĕ фильм кăтартма тытăннă. Ăна документлă фильмсен тĕп студийĕн фронтри операторĕсем ушкăнĕ ўкернĕ. Режиссерсем—сталинла премии лауреачĕсем В. Беляковпа И. Посельский тата кинорежиссер И. Венжер; музыкăна йĕркелекенĕсем Д. Блокпа С. Чернецкий.

Фильм питĕ вăйлă тухнă, вăл кирек кама та чĕренех пырса тивет. Вăл куракана мĕн пуçласа пĕтиччченех хумхантарать. Ăна куракан чи малтанах экран çинче фронтри сводлăй полкăн малти речĕсем курăнса кайсанах тĕлĕнсе хумханма пуçлать те тем тĕрлĕ ракетăсен çуттипе çуталса тăракан Мускав урамĕсенче, паркĕсенче, площадьсенче пĕтĕм халăх мĕнле хĕпĕртесе савăннине кăтартакан юлашки кадрсем пĕтиччченех хумханса ларать. (ТАСС).

Заем тиражĕсем

Иккĕмĕш Пятилетка Заемĕн (тăваттăмĕш çулхи кăларăмĕн) 36-мĕш тиражĕ тата СССР Союзĕн Оборонине Çирĕплетмелли Заемăн 31-мĕш тиражĕ пулса иртнĕ. Иккĕмĕш Пятилетка Заемĕн тиражĕнче пĕр миллион та 800 пин выляв 239 миллион та 420 пин тенкĕлĕх тухнă. СССР Союзĕн Оборонине Çирĕплетмелли Заемăн тиражĕнче 442 пин те 550 выляв 72 миллион та 588 пин те 800 тенкĕлĕх тухнă.

Ку заемсен çитес тиражĕ 1945 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче пулать.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсене сыватас ĕç

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен совет работникĕсем хăйсен мĕнпур вăйне Хĕрлĕ Çарăн аманнă воинĕсен пурнăçне çăлса хăварас ĕçе панă. 1944 çулта Мускав облаçĕнчи госпитальсенчен унта сывалса выртнă воинсенчен 76,7 проценчĕ сывалса хăйсен чаçне таврăннă. Пĕррĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче патша çарĕн санитари службы чирлисемпе аманнисене 50 процентран ытла строя тăратайман.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсене сыватас тĕлĕшпе нумай хуласенче восстановительнăй хирурги больницăсене туса хунă. Халĕ вĕсем валли ятарласа эвакогоспитальсем уйăрса параççĕ, пысăк больницăсем çумĕнче уйрăм отделенисем организацилеççĕ.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсене сыватас ĕçĕн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Мускав облаçĕнчи медицинăн наукăпа тĕпчев институтĕнче ятарласа клиника организациленĕ. Вăл клиникăра инвалидсен чирĕсене тата вĕсене сыватмалли майсене вĕренеççĕ. (ТАСС).

МИЛЛИОН КИЛОГРАММ ЧЕЙ

Аджари АССР-ĕнчи чей фабрикисем кăçал çĕршыва пĕр миллион килограмм чей пама хатĕрленеççĕ. Вăрçă хыççăн пирвайхи хут «Букет Грузии», «Экстра» йышши чи лайăх чей туса кăларма тытăнаççĕ. Çĕнĕ чее пысăк хăвăртлăхсемпе туса кăлараççĕ. Çак кунсенче Мускава пĕр вагон чей ăсатнă. (ТАСС).

Футбол

ВЦСПС кубокне илессишĕн

Шупашкар хулинче ВЦСПС кубокне илессишĕн футболăн икĕ матчĕ пулса иртнĕ. Ку кубока илессишĕн пыракан футбол вăййине çĕршыври профсоюзсен пур командисем те хутшăннă.

Малтанах Шупашкарти «Сталинец» футболисчĕсен команди вырăнти «Азот» футболисчĕсен командине çăмăллăнах çĕнтерчĕ. Вĕсен результачĕ 5:1 пулчĕ.

Июлĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарта «Сталинец» футболисчĕсен команди Ижевск хулинчен килнĕ «Зенит» футболисчĕсемпе выльрĕ. «Зенит» футболисчĕсен команди Хусанти «Крылья Советов» футболисчĕсене çĕнтернĕ пулнă.

Ижевск футболисчĕсем Шупашкар футболисчĕсене çĕнтерчĕç. Вĕсен результачĕ 6:2 пулчĕ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ФУТБОЛИСТСЕМ ЦДКА ФУТБОЛИСЧĔСЕН КОМАНДИПЕ ТĔЛ ПУЛНИ

Чăваш республики 25 çул тултарнине уявланă кунсенче Шупашкарта Хĕрлĕ Çарăн Центральнăй Çурчĕн футбол команди килсе Шупашкарти футболистсемпе юлташла тĕлпулу туса ирттерчĕ. ЦДКА футболисчĕсен командине СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Никишин юлташ ертсе пычĕ. Мускав футболисчĕсен хушшинче паллă спорт мастерĕсем Шиловский, Орехов тата Шлычков футболистсем пулчĕç.

Вăйă уйĕнче хăнасем малтан Шупашкара хăнана килнĕ Улатăрсен сборнăй командипе выляса, Улатăрсене 14:0 результатпа çĕнтерчĕç. Иккĕмĕш хут Мускав футболисчĕсем Шупашкар футболисчĕсемпе тĕл пулса, Шупашкарсене 8:1 результатпа çĕнтерчĕç.

АДМИРАЛ НАХИМОВ

(Вилнĕренпе 90 çул тултарнă май)

Вырăссен паллă флотоводецĕ Павел Степанович Нахимов 1802 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче çуралнă. Тинĕс корпусĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, вăл флотра ĕçлеме пуçласанах тинĕсе питĕ хытă юратнă, карап çинчи йывăр тата интереслă пурнăçа кăмăлланă. Пулас флотоводецăн шухăш-кăмăлне унăн учителĕ М. П. Лазарев адмирал—19-мĕш ĕмĕрĕн 1-мĕш пайĕнчи вырăс флочĕн паллă деятелĕсенчен пĕри хавхалантарнă.

Пĕррĕмĕш хут Нахимов 1827 çулта Наварино патĕнчи çапăçура пулнă, унăн ăна орденпа наградăлама тата унăн чинне хăпартма тăратнă. Çак çапăçу хыççăн Нахимова, Лазарев ыйтнă тăрăх, турксенчен тытса илнĕ суднăн командирĕ пулма уйăрса лартнă. Вăл карапа çĕнтерў ячĕпе «Наварин» ятлă хунă пулнă. 1834 çулхи январь уйăхĕнче Нахимова Хура тинĕс флотне куçарнă. Çирĕм çул хушши вăл Хура тинĕс флотĕнче карап командирĕ пулса, карапсен отрячĕн командирĕ пулса тата эскадра командующийĕ пулса пурăннă. Унăн авторитечĕ çулран çулах ўссе пынă, офицерсемпе матроссем ăна ытларах та ытларах юратма пуçланă. Хăйсем Нахимов командир пулса ертсе пыракан карап çинче пулнине вĕсем телей вырăнне хурса, унăн хыççăн кирек ăçта кайма та хатĕр пулнă.

Нахимов питĕ тўрĕ кăмăллă çын пулнă, тăван çĕршывпа флотшăн лайăх ĕçлессине хăйшĕн те, ыттисемшĕн те питĕ пысăк вырăна хунă. Ăна пĕлекен çынсем унăн çар талантне, командир ирĕкне, тăтăклă тата паттăр пулнине хисепленĕ. Службăра вăл çирĕп çын пулнă, çав вăхăтрах тата ăшă чĕреллĕ, кăмăллă çын пулнă.

Нахимов Российăна çав тери юратнă, вăл вырăс матросне — унăн ăсне, пултарулăхне, паттăрлăхне хисепленĕ. Матрос—флотăн тĕп вăйĕ, тенĕ вăл. «Эпир хамăра-хамăр юратакан çынсем çеç мар, çĕршывăн чăн-чăн тарçисем пулатпăр пулсан, пирĕн матроса хăпартас пулать, ăна вĕрентес пулать, хăюллă та паттăр пулма хăнăхтарас пулать», тенĕ вăл. Офицерсене вăл матросăн этем чысне хисеплеме хушнă, матроссемпе хăй те çывăх пулнă, вĕсен нушисене лайăх пĕлсе тăнă тата вĕсемшĕн тăрăшнă. Матроссем хăйсем те Нахимова пурте юратнă.

Тинĕс службинче пулнă 39 çултан Нахимов 17 çулне походсенче ирттернĕ. 1853 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче Турци флотне хирĕç Синоп патĕнче пулнă çапăçура Нахимовăн таланчĕ питĕ ўсĕн палăрнă. Çапăçура вырăс флочĕ туроксене пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Туроксен эскадрин командующийĕ Осман-паша адмирал хăй те тыткăна лекнĕ.

Акăлчансемпе французсем тапăнниччен 1854 çулта Севастополь хулине паттăррăн хўтĕленĕ кунсенче те Нахимов Корниловпа пĕрле хулана хўтĕлес ĕçре чи паллă вырăн йышăннă. Çак икĕ деятель ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине пула, Севастополь тавра кĕске вăхăтрах оборона рубежĕсем пулса тăнă, хулана хўтĕлекен çынсен вăйĕсене пĕтĕçтернĕ. Оборона начальникĕ Корнилов 1854 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче, хулана пĕррĕмĕш хут штурмланă чухне вилнĕ хыççăн, оборона ĕçне ертсе пырассине Нахимов хăй çине илнĕ. «Вырăс ятне çĕнтерў кăна тивĕçлĕ» тесе чĕннине оборонăн кашни участникĕ закон вырăнне шутланă.

1855 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче (кивĕ стильпе) Нахимов яланхи пекех чи хăрушă бастион патне кайнă. Кунта вăл çынсене хавхалантарас тенĕ. Çав вăхăтра ăна тăшман пульли амантнă та, вăл вара тепĕр икĕ кунтан, тăна кĕмесĕрех, вилсе кайнă.

Совет халăхĕ, пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ Тăван çĕршывăн хĕрўллĕ патриочĕн ятне, халăх геройĕн Нахимов адмиралăн ятне пысăка хурса хаклать. Унăн ячĕпе пирĕн правительство орденсемпе медальсем турĕ, вăл орденсемпе медальсене чи паттăр моряксене парса наградăлаççĕ.

Севастополь хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен хўтĕленĕ чаплă кунсенче, Çурçĕрти, Балтика тинĕсĕнчи, Каспи тинĕсĕнчи тата Дунай шывĕ çинчи нумай çапăçусенче совет морякĕсем пысăк паттăрлăхпа, тĕлĕнмелле çирĕплĕхпе çапăçса, Нахимовпа унăн паттăрĕсен паха традицийĕсене ўстерсе упрарĕç.

П. МОРОЗОВ,
1-мĕш рангри капитан.

ТРУМЭН ЕВРОПĂНА ТУХСА КАЙНĂ

ЛОНДОН. июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 7-мĕшĕнче Трумэн президент караппа Европăна тухса кайни çинчен июлĕн 9-мĕшĕнче кăçхине тепĕр хут çирĕплетсе каланă. Трумэнпа пĕрле государство секретарĕ Бирнс кайнă. Карап çинче политикăпа çар советникĕсем нумай. Унта «Пысăк тройка» пухăнас умĕнхи канашусем пулса иртеççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент Европăна кайма тухнă крейсер çинче Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пур. Корреспондент çапла пĕлтерет: Президентпа пĕрле Европăна çаксем каяççĕ: США-н государство секретарĕ Бирнс, флот адмиралĕ Леги, Шурă Çуртăн пичет ĕçне пăхса тăракан секретарĕ Росс, государство департаменчĕн Европа тĕлĕшпе ĕçлекен управленийĕн директорĕ Матьюс, государство департаменчĕн Россия тĕлĕшпе ĕçлекен экспертĕ Болен, государство департаменчĕн представителĕ Коэн.

Европăра вĕсемпе çаксем пĕрлешеççĕ: Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис, çар министерствин, тинĕс министерствин тата государство департаменчĕн представителĕсем. Виçĕ державăн лидерĕсен конференцийĕнче тата çаксем пулаççĕ: Америка çарĕн штаб начальникĕ генерал Маршалл Америка флочĕн главнокомандующийĕ флот адмиралĕ Кинг, çавăн пекех тата Америка çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ генерал Арнольд.

ЧЕРЧИЛЛЬ ФРАНЦИРЕ ПУЛНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИН ПРЕДСТАВИТЕЛĔ КАЛАНИ

ПАРИЖ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ пресс-конференцире ĕнер çапла каланă: Франци руководителĕсем Черчилль Францире пулнă вăхăтра унпа тĕл пулма шутламаççĕ, тенĕ.

К. Е. ВОРОШИЛОВ БУДАПЕШТА ТАВРАННА

БУДАПЕШТ, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 10-мĕшĕнче ирхине Будапешта союзниксен Венгрири Контроль Комиссийĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов таврăннă.

ГОЛЛАНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПОЛЬША ХАЛĂХ ПĔРЛЕХĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННĂ


ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Гаага хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Голландин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Клеффенс Голланди правительстви Польша Халăх Пĕрлехĕн Правительствине йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

АРГЕНТИНĂНА ГЕРМАНИН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИ ПЫНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăн Мардель-Плата портне нимĕççен подводнăй лодки пынă. Подводнăй лодка экипажĕ портри влаçсен аллине панăннă. Аргентинăри тинĕс влаçĕсене çавăн çинчен çийĕнчех пĕлтернĕ. Влаçсем порт районне пыма чарса лартнă. Подводнăй лодкăна хальхи вăхăтра тинĕс вăйĕсем пăхса тăраççĕ. Çак подводнăй лодкăпа килнисен хушшинче Германирен тарнă паллă беженецсем пурри паллă мар-ха.

Германин Совет çарĕсем оккупацилесе тăракан зонинче Совет çар администрацийĕн начальникĕсене уйăрса лартнă

БЕРЛИН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Совет çар администрацийĕн Главноначальствующийĕ Германири оккупациллĕ Совет çарĕсен Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков июлĕн 9-мĕшĕнче приказ кăларнă. Çав приказра çапла каланă: провинцисене тытса тăма тата вырăнти самоуправлени органĕсен ĕçĕсене контроллесе тăма провинцисенче тата федеральнăй çĕрсенче Совет çар администрацийĕн начальникĕсем тата гражданла ĕçсене пăхса тăма вĕсен заместителĕсем пулаççĕ.



Çав приказпа Федюнинский генерал-полковника Мекленбург провинцийĕн Совет çар администрацийĕн начальникĕ пулма лартнă. Мекленбург провинцине Померанин хĕвеланăç пайне те кĕртнĕ, анчах та Штеттин хулине унта кĕртмен. Гражданла ĕçсене пăхса тăракан заместитель пулма Косарев генерал-майора лартнă.

Бронетанковăй çарсен Маршалне Богданова Бранденбург провинцийĕн Совет çар администрацийĕн начальникĕ пулма лартнă. Çав провинцие Коттбус хулипе çав округăн пĕр пайне кĕртнĕ. Гражданла ĕçсене пăхса тăракан заместитель пулма Шаров генерал-майора лартнă.

Кузнецов генерал-полковника Саксони провинцийĕнчи Совет çар администрацийĕн начальникĕ пулма лартнă. Ку провинцие Ангальт ятлă федеральнăй çĕре кĕртнĕ. Унăн пĕррĕмĕш заместителĕ пулма Перхорович генерал-лейтенанта лартнă, гражданла ĕçсене пăхса тăракан заместителĕ пулма Котиков генерал-майора лартнă.

Федеральнăй Саксони çĕрĕнчи Совет çар администрацийĕн начальникĕ пулма Катуков генерал-полковника лартнă. Ку района Силезири Лигниц округĕн пĕр пайне кĕртнĕ. Гражданла ĕçсене пăхса тăракан заместителĕ пулма Дубровский генерал-майора лартнă.

Приказра çапла каланă: «провинцисенче федеральнăй çĕрсен Совет çар администрацийĕн начальникĕсем эпĕ çирĕплетсе лартнă провинци управленийĕсен президенчĕсемпе çыхăну пуçласа ямалла, провинцисенче халех йĕркеллĕ пурнăç тума пуçламалла. Саксони провинцийĕн федеральнăй Тюринги çĕрĕн президенчĕсемпе вице-президенчĕсене кĕçех çирĕплетсе паратăп», тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН КОМАНДОВАНИЙĔН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

БЕРЛИН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 10-мĕшĕнче Берлинра «Мăн Берлин» районне тытса тăрас ыйтупа çыхăнса тăракан ĕçсене малалла пăхса тухмашкăн союзниксен командованийĕн представителĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу çинчен пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: канашлăва Жуков Маршал председатель пулса ертсе пынă. Клэй генерал-лейтенант Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсен, Уикс генерал Британин хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕ пулнă. Канашлура виçĕ представитель пĕр-пĕрне лайăх ăнланнă, усăллă решенисем йышăннă. Виçĕ представитель халех союзниксен çар комендатурине туса хума килĕшнĕ, çав комендатура союзниксен администрациллĕ влаçĕ пулса тăрать; союзниксем Германие контроллесе тăмалли механизм çинчен тунă килĕшў тăрăх, вăл «Мăн Берлин» районне тытса тăмалла.

Çав комендатурăн пĕррĕмĕш ларăвĕ июлĕн 11-мĕшĕнче пулать. Виçĕ представитель пурте пĕр саслă пулса, çав ларăва Франци представительне чĕнме килĕшнĕ. Франци представителĕ вара союзниксен комендатурин тăваттăмĕш членĕ пулать.

Комендатура союзниксен Германири Контроль Совечĕ пĕтĕмĕшле ертсе пынипе ĕçлесе тăмалла. Комендатурăра тăватă çар коменданчĕ пулмалла. Вĕсенчен кашниех черетпе главнăй çар коменданчĕ пулса ĕçлемелле. Вĕсем кашни 15 кунтан улшăнса пымалла. Горбатов генерал-полковник чи малтанхи главнăй комендант пулать. Комендантсене ĕçлеме технически персонал пулăшса тăрать. Çар персоналăн Берлин хулинчи вырăнти органсене ертсе пымалла тата вĕсен ĕçсене контроллесе тăмалла. Приказсемпе инструкцисем вырăсла, акăлчанла, французла тата нимĕçле тухса тăмалла. Берлин хулинчи гражданла халăха апат-çимĕç тăратас ыйтăва часах татса парĕç. Çав апат-çимĕçе Берлин хулине Германин оккупациленĕ пур зонисенчен те илсе пымалла.

Çавăн пекех вутă тăратас ыйтăва те татса пама шутлаççĕ. Ларура союзниксен Германие контроллесе тăмалли механизм çинчен тунă Килĕшĕвĕн тĕрлĕ положенийĕсене пурнăçа кĕртме пуçлас тĕлĕшпе тăратнă сĕнўсене пăхса тухнă.

СОЮЗНИКСЕН «МĂН БЕРЛИНРИ» ÇАР КОМЕНДАТУРИН ПĔРРЕМĔШ ЛАРĂВĔ

БЕРЛИН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 11-мĕшĕнче Берлинра союзниксен «Мăн Берлинри» çар комендатурин пĕррĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура çаксем пулнă: советсен çар коменданчĕ генерал-полковник Горбатов, Америкăн çар коменданчĕ генерал-майор Паркс, Англин çар коменданчĕ генерал-майор Лайн тата Франци командованийĕн представителĕ генерал де-Бошен, çавăн пекех тата ларура арми генералĕ Соколовский пулнă. Ларăва генерал-полковник Горбатов председатель пулса ертсе пынă.

Ларура союзниксен çар комендатурин ĕçне организацилесси çинчен тата çар комендатурăна хăш çуртра вырнаçтарасси çинчен сўтсе-явнă. «Мăн Берлинăн» главнăй çар коменданчĕн ĕçĕсене кам хыççăн кам туса пымаллине палăртса хунă. Çакăнпа пĕрлех комендатура ларăвĕнче хулана тытса тăрас тĕлĕшпе, халăха апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе тата коммунальнăй хуçалăха организацилес тĕлĕшпе практикăллă ыйтусене сўтсе-явнă.

Союзниксен Берлинри çар коменданчĕсем, пурте пĕр саслă пулса, Берлинăн оккупаци зонисенче пуринче те совет командованийĕ тунă режима çаплипех хăварма килĕшнĕ.

США-ри ĔÇСĔР ÇЫНСЕНЕ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). США представительсен палатин бюджет комиссийĕн председателĕ Донтон июлĕн 9-мĕшĕнче палатăна законопроект тăратнă. Çав законопроектра нумаях пулмасть ĕçсĕррисене пулăшмалли системăна анлăлатса лайăхлатас пирки Трумэн кăларса тăратнă сĕнўсем пирки каланă. Проектра ĕçсĕррисене пулăшмалли пособие ўстересси çинчен те каланă.

РЕДАКЦИРЕН

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 132-мĕш номерĕн пĕррĕмĕш страницинчи иккĕмĕш статьян ятне çапла вуламалла: «Чăваш АССР Верховный Совечĕн юбилейлĕ сессийĕнче РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕррĕмĕш Заместителĕ И. А. Власов тухса калани».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШСЕН ЯЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ АГРОНОМИ ФАКУЛЬТЕЧĔПЕ ЗООТЕХНИКА ФАКУЛЬТЕЧĔН 1-МĔШ КУРСНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа (сăмахпа каласа тата çырса) экзамен ăнăçлă панисене илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: ăçта мĕнçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, автобиографи, виçĕ сăн ўкерчĕкĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельскохозяйственный Институт, Приемная комиссия.

Шупашкарти фармацевтика шкулĕ 1-мĕш курса вĕренме илет.

Фармацевтика шкулĕ провизорсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлет.

Шкулта 3 çул вĕренмелле.

Шкула 15 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

1944—45 çулсенче туллимар вăтам шкултан отлично вĕренсе тухнисене тата вăтам шкултан, рабфакран, техникумран, педагогика училищинчен е ытти училищĕрен вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

1944—45 çулсенче туллимар вăтам шкулсенчен «пятерка» тата «четверка» паллăсемпе вĕренсе тухнисен вырăс чĕлхипе, арифметикăпа, СССР Конституцийĕпе, химипе тата тăван чĕлхепе экзамен памалла.

Заявленисене сентябрĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене (копийĕсене мар) тăратмалла: 1) ăçта мĕнçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 4) икĕ сăн ўкерчĕкĕ, çав ўкерчĕксем çине заявлени паракан ала пусмалла та домоуправленире, ял Советĕнче е нотариус патĕнче çирĕплетмелле.

Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Студентсене пурне те стипенди, рабочисен нормипе апат-çимĕç параççĕ, пурăнса тăмалли вырăн параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Аптечная, 13, Фармацевтическая школа. Çыру ăшне 60 пуслăх марка чиксе ямалла.

Улатăрти чугун çул транспорчĕн техникумне преподаватель пулса ĕçлеме инженер-электрик тата ирĕлтерсе е хĕртсе çыпăçтарас ĕçе пĕлекен инженер кирлĕ. Хваттер параççĕ.

Адрес: гор. Алатырь, Первомайская, 50, Железнодорожный техникум.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне ялан ĕçлеме бухгалтерсем, ответлă исполнитель, снабженипе сбыт агенчĕсем, кладовщиксем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—83, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн [illegible], рабселькорсен пайĕн — 0-[illegible] издательство конторин — 0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж [illegible]000

НТ 00161.